ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЁ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЁСЕНЕ ПАТШАЛĂХĂН УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИЙЁСЕНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЁН 1 ТАТА 14[8] СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашё
2024 çулхи раштав уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене патшалăхăн уйрăм полномочийĕсене парасси çинчен" 2006 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 55 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 84, 85 №-сем; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 92 (I том), 94 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 5, 6, 12 №-сем; 2014, 5, 6, 11 №-сем; 2015, 12 №; 2016, 10, 12 №-сем; 2017, 3, 7 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 13-мĕшĕ; 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 6-мĕшĕ, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, çу уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, ака уйăхĕн 30-мĕшĕ, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн

6-мĕшĕ, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 28-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000244 №; "Республика" хаçат, 2022, раштав уйăхĕн 22-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕ, 0000000000000736 №, нарăс уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000760 №; "Республика" хаçат, 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕ; 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 16-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 11-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьян 4-мĕш пайĕн 5-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕнче "Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ палăртать." сăмахсене "Чăваш Республикин "Чăваш Республикин территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрасси çинчен" 2024 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 76 №-лĕ саккунĕпе палăртаççĕ." сăмахсемпе улăштарас;

2) 14^8 статьян 2-мĕш пайне çакăн пек çырса хурас:

"2. Муниципаллă округсен тата хула округĕсен бюджечĕсене муниципаллă округсен тата хула округĕсен территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрас ĕç-хĕле пурнăçланă чухне мероприятисем йĕркелес енĕпе паракан Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен уйăрса паракан субвенцисен калăпăшне (S_i) çак формулăпа палăртаççĕ:

$S_i = N \times Q_i + So_i$, ăçта:

S_i – i-кирек хăш муниципаллă округăн (хула округĕн) бюджетне уйăрса паракан субвенцисен калăпăшĕ;

N – хуçасăр пĕр чĕр чуна пăхса усрас ĕç-хĕле пурнăçланă чухне мероприятисем йĕркелеме каякан тăкаксен нормативĕ, ăна Чăваш Республикин ветеринари енĕпе патшалăх политикине пурнăçлакан ĕç тăвакан органĕ Чăваш Республикин финанс енĕпе патшалăх политикине пурнăçлакан ĕç тăвакан органĕпе килĕштернĕ тăрăх палăртать;

Q_i – i-кирек хăш муниципаллă округра (хула округĕнче) календарлă çулталăк хушшинче тытма палăртакан хуçасăр чĕр чунсен хисепĕ;

So_i – муниципаллă округсен тата хула округĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем муниципаллă округсен тата хула округĕсен территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрас ĕç-хĕле пурнăçланă чухне мероприятисем йĕркелес енĕпе паракан Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене

і-кирек хăш муниципаллă округра (хула округĕнче) пурнăçлама каякан тăкаксен расчет хакĕ, ăна çак формулăпа палăртаççĕ:

So_i = Рс + Рмз, ăçта:

Рс – пĕр служащие тытса тăма каякан тăкаксем, вĕсем муниципаллă округсен тата хула округĕсен территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрас ĕç-хĕле пурнăçланă чухне мероприятисем йĕркелес енĕпе паракан Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçланипе пулаççĕ;

Рмз – муниципаллă округсен тата хула округĕсен территорийĕнче хуçасăр чĕр чунсене пăхса усрас ĕç-хĕле пурнăçланă чухне мероприятисем йĕркелес енĕпе паракан Чăваш Республикин патшалăх полномочийĕсене пурнăçлама каякан пурлăх тăкакĕсем.".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ — О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕ
97 №